***Маланчева Олеся Николаевна***

воспитатель

МБДОУ «Аккиреевский Д/С «Аленушка»

с. Аккиреево, Республика Татарстан

# ИЗ ОПЫТА РАБОТЫ ДЕТСКОГО САДА РЕСПУБЛИКИ ТАТАРСТАН ПО ОБУЧЕНИЮ ЧУВАШСКОМУ ЯЗЫКУ

***Аннотация****: в статье представлен опыт работы педагогов дошкольной образовательной организации Черемшанского района Республики Татарстан. В шести организациях (из них две группы при школе) дети говорят на чувашском языке и приобщаются к чувашской культуре.*

***Ключевые слова****: родной язык, дошкольное образование, игры, чувашский язык, диаспора, неделя чувашского языка.*

***Аннотаци****: Ку статьяра Тутар Республикин Çарӑмсан районӗнчи Акрель ача садӗнче ӗçлекен воспитательсем хӑйсен ӗç опычӗпе паллаштараççӗ. Районтиултӑ организацире (вӗсенчен иккӗшӗ шкулсен çумӗнче) тӑван чӑваш чӗлхине тата культурине вӗрентеççӗ.*

***Тӗп сӑмахсем****: тӑван чӗлхе, чӑваш чӗлхи, диаспора, шкулченхи вӗренӳ, вӑйӑсем, чӑваш чӗлхи эрни.*

2010 çулхи Раççейри çырав материалӗсене пӑхсан Тутар Республикинчи Çарӑмсан районӗнче пурӑнакансенчен 54,1 процентӗ тутарсем, 22,8 процентӗ чӑвашсем, 17,8 процентӗ вырӑссем пулнӑ, 5,3 процентӗ – ытти халӑхсем. Чӑвашсен хисепӗ халӗ те районта пурӑнакан халӑхсенчен иккӗмӗш вырӑнта.

Районти тӗрлӗ халӑх çыннисем туслӑн, пӗрне-пӗри хисеплесе пурӑнаççӗ. Çакӑ вӗсен культурине аталантарма тан условисем туса панинчен те килет. Шкул çулне çитмен ачасене воспитани парас ӗçре те лайӑх палӑрать çакӑ. Çарӑмсан районӗнче вун тӑхӑр уйрӑм тата сакӑр шкул çумӗнчи ача сачӗ (пӗтӗмпе – çирӗм çиччӗ). Çав шутран вун иккӗшӗ – тутар ялӗсенче, вӗсенче ачасемпе тӑван тутар чӗлхипе калаçса воспитани параççӗ; тӑххӑрӑшӗнче – вырӑсла; улттӑшӗнче (вӗсенчен иккӗшӗ шкулсен çумӗнче) тӑван чӑваш чӗлхипе тата культурипе



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

паллаштараççĕ. Çак ĕçе район администрацийĕн вĕренӳ управленийĕ йĕркелесе, тĕрĕслесе тăрать.

Эпĕ, Маланчева Олеся Николаевна, 1982 çулхи çу уйăхĕн саккăрмĕшĕнче Тутарстан Республикинчи Çарăмсан районĕнчи Акрель ялĕнче çуралнă. 11 класс та çак ялтах вĕренсе тухнă, мĕн пĕчĕкренех педагог пулма ĕмĕтленнĕ. Пĕтĕм пуканесене пĕр рете лартса вĕсене пĕлӳ панă. Анне шкулта ĕçлени те мана çак профессие суйлама пулăшнă. Шкул пĕтернĕ хыççăн нумай шутласа тăман, Елабуга педагогика университетне вĕренме кĕнĕ. Ĕç çулне 2005 çулта Çарăмсан шкулĕнче пуçланă. Тăван ялта ача шучĕ ӳссе пынă май ача садĕнче тепĕр ушкăн уçăлнă. Мана, çамрăк педагога, çавăнта ĕçлеме сĕнчĕç. Унтанпа 11 çул иртрĕ. Халĕ те хамăн юратнă профессинчех ĕçлетĕп.

Пирĕн ача садĕнче 27 чăваш ачи: 17 ача аслă ушкăнра, вĕсен воспитателĕ Аютова Наталья Михайловна. 10 ача кĕçĕн ушкăнра, вĕсемпе вара эпĕ ĕçлетĕп.

Ушкăнсен пӳлĕмĕсенче пирĕн тăван чĕлхепе культура кĕтесĕ пур. Унти наци тумĕсемлĕ пуканесемпе выляма ачасем питĕ юратаççĕ. Чăваш писателĕсемпе поэчĕсен кĕнекисем те пур: К. Вишневскаян «Асанне юррисем», Петĕр Ялкирĕн «Ача садĕнче», И.Я. Яковлевăн «Утăра» тата ыт. те. Ачасене чăваш халăх сăмахлăхĕпе паллаштарас тесе альбомсем ятарласа хатĕрлерĕмĕр: «Шухă вăйăсем», «Тупмалли юмахсем», «Ваттисен сăмахĕсем», «Сăпка юррисем». Çаксемпе пĕтĕмпе эпир ачасемпе режимлă самантсенче халăх пултарулăхĕпе паллаштарнă чухне усă куратпăр.

Ачасене халăх культурипе паллаштарнă вăхăтра усă куракан тепĕр меслет – вăйăсем. Ача-пăча вăййисем урлă чи кĕçĕннисем те халăх кун-çулне пĕлме пуçлаççĕ. Вăйă ячĕсем те ĕлĕк çынсем мĕн ĕçлесе тата мĕнле кăмăл-туйăмпа пурăнни çинчен каласа параççĕ. Тĕслĕхрен, «Ухăран пемелле» «Лашалла», «Акара», «Чăхăлла», «Суккăр такалла», «Çивĕч пакшасем», «Пулăçсем», «Ялава сыхла», «Йĕппипе çиппи», «Штантăрла», «Юхан шывсем», «Çĕрĕ памалла», «Тинĕс хумханать» тата ытти вăйăсем те.

Ачасем уйрăмах чупмалли-сикмелли хускануллă вăйăсене кăмăллаççĕ.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

*«Тинĕс хумханать» вăйă йĕрки.* Вылякансем 7-рен пуçласа 30 ачана çитиччен пулма пултараççĕ. Вăйă валли тӳрем вырăн суйласа илмелле. Вылякансем, алран алла тытăнса, пысăк карта тăваççĕ. Кунсăр пуçне, кашни ачиех, йĕр туртса, çав карта тулашĕнче хăйне валли пĕчĕкункă ӳкерет. Пĕрин кăна, «хуралçăн», ун пек çаврашка пулмасть.

Шăпа ярса палăртнă хуралçă карта тулашĕнче çӳрет: «Тинĕс хумханать, тинĕс хумханать», – текелесе, кама та пулин çурăмĕнчен пырса тĕртет. Хăй малаллах утать, тĕкĕннĕ ачи хăй вырăнĕнчен тухса ун хыççăн пырать. Хуралçă çапла пур ачан та хăй хыççăн ертсе каять, утнă май тĕрлĕ хускану тăвать, ыттисем те ун пекех хуçкаланаççĕ (хăвăрт е вăрах утаççĕ, вĕçнĕ пек туса, аллисене сулкалаççĕ, кукленсе лараççĕ т. ыт. те.). Сасартăк хуралçă: «Тинĕс лăпкă», – тесе камăн та пулин çĕр çинче чĕрсе тунă ункине йышăнма ыткăнать, ыттисем те çапла тума васкаççĕ, анчах та вырăн кашнинех çитмест. Кам вырăнсăр юлнă, вăл хуралçă пулать.

*«Çĕрĕ памалла» вăйă йĕрки.* Ку вăййа тĕрлĕ вырăнта, тĕрлĕ вăхăтра выляма пулать. Выляма çĕрĕ е пĕчĕк япала (тӳме, патак) кирлĕ.

Ачасем юнашар ларса тухнă. Асли çĕрĕ валеçет, çĕррине пĕрне çеç парать. Вара вĕçĕнче ларакан ача патне пырать те аллине çапать:

– Çĕрĕ камра?

Лешĕ хуравлать. Тĕрĕс каласассăн вăл çĕрĕ валеçекен вырăнне йышăнать, пĕлеймесессĕн – хăй вырăнĕнчех юлать, вăйă малалла тăсăлать.

*«Суккăр упалла» вăйă йĕрки.* Шăпа ярса ертсе пыраканнине – «суккăр упана» суйлаççĕ. Куçне тутăрпа çыхаççĕ. Суккăр упа аллисене сарса вылякансене шырать. Вылякансем упана аллисемпе пырса тĕкĕнсе вăрçтараççĕ, кайран тараççĕ, ун çумĕпе кукленсе ларса иртсе каяççĕ. Кама тытать – çавă суккăр упа пулать.

*«Тилĕпе хурсем» вăйă йĕрки.* Вылякансенчен «тилĕ» суйлаççĕ, ыттисем вара «хурсем». Хурсем курăк çисе çӳреççĕ (ачасем хур уттипе çӳреççĕ). Кĕтмен çĕртен тилĕ сиксе тухать те, хурсем: «Ки-как, ки-как!», – тесе çавракана пухăнаççĕ.

Т и л ĕ. Эп сире çисе яратăп!



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Х у р с е м. Ан тив пире!

Т и л ĕ. Çиетеп!

Х у р с е м. Пирĕн юрра итлесе пăхсам. Ки-как! Ки-как!

Хурсем юрласа параççĕ те вĕçсе каяççĕ. Тилĕ вĕсене хăвалать. Кама тытать, çавă тилĕ пулать.

Шут сăввисене, хăвăрткаларăшсене, вăйăсенче усă куракан ытти сăвăсене ачасемпе чăвашла вĕренетпĕр. Çакă вăййа тата интереслĕрех те хавхалануллăрах тума май парать.

Пирĕн ача садĕнче çулсеренех «Чăваш чĕлхи эрни» ирттересси йăлана кĕнĕ. Ăна уявласси чăваш халăхне çутта кăлараканĕн, чăваш çырулăхне йĕркелесе яраканĕн Иван Яковлевич Яковлевăн çуралнă кунĕпе çыхăннă. Ку эрнере эпир мĕн пур мероприятисене чăвашла ирттеретпĕр: савăнăçлă вăйăсем выляттаратпăр, И.Я. Яковлев çинчен каласа паратпăр, чăваш тĕрри-эрешĕпе паллаштаратпăр. Эрне хушши пыракан мероприятисен пĕлтерĕшĕ ачасемпе çитĕннисене чĕлхе тата халăх историне аса илтерни кăна мар, туслăх туйăмне çирĕплетме, пĕр-пĕрне ăнланма тата пулăшса пыма хăнăхтарать. Уйрăмах ача садĕнче ирттерекен мероприятисене ачисемпе пĕрле ашшĕ-амăшĕсем хутшăнни савăнтарать.

Воспитатель ĕçĕ йывăр пулин те эпир юратса ĕçлетпĕр. Кашни ĕçре лайăххи кăна мар, йывăрлăхсем те пур. Чăвашла кĕнекесем, чăваш тумĕллĕ пуканесемпе ачасем валли çĕлеттернĕ чăваш тумĕсем çукки кулянтарать. Çапах алă усса лармастпăр, хамăр вăйпа пултарнă таран тăрăшатпăр. Аслă ушкăнри ачасемпе ĕçлекен Наталья Михайловна чăн-чăн ал ăсти. Хăй ушкăнĕнчи ачасем валли чăваш тумĕсене пĕтĕмпех хăй çĕлерĕ. Ачасем тĕрлĕ уявсем ирттернĕ чухне капăр çи-пуçа савăнсах тăхăнаççĕ. Уявсем пире туслăрах пулма, воспитательсемпе ашшĕ-амăшĕсене ачасене тĕрĕс вĕрентсе ӳстерес ĕçре пĕрле канашласа ĕçлеме пулăшаççĕ.

***Список литературы***

1. Доброва Н.В. «Ача – çемье – вĕрентекен» пĕрлĕх çирĕплĕхĕ шкул çулне çитмен ачана аталанма пулăшакан тĕп услови пулни / Н.В. Доброва, М.В. Петрова // Национальные языки и литературы в условиях би- и полилингвизма: сб.



Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

научных трудов / отв. ред. А.Д. Ахвандерова. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. гос. пед. ун-т, 2019. – С67–72.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)